Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* 123 N (4692) *1998 çулхи октябрь (юпа) уйăхĕн 28-мĕшĕ, юнкун* *Палăртнă хакпа.*

## Социаллă хӳтлĕх паракан органсен çĕнĕ задачисем

***Нурлатра Кама леш енчи хуласемпе районсенчи халăха социаллă хӳтлĕх паракан органсен ертӳçисемпе специалисчĕсен икĕ кунхи семинарĕ пулни çинчен "Туслăх" хаçатра пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ. Вăл компенсаци тӳлевĕсемпе пособисем шутлассипе отчетлăхĕ тĕлĕшпе ĕçленин йĕркелӳ аспекчĕсене тата республикăра инвалидсене реабилитацилес тĕлĕшпе палăртнă çул-йĕр комплексне пăхса тухрĕ. Паян - сӳтсе явнине тĕплĕнрех çутатни.***



Семинарăн пĕрремĕш кунне хутшăнма йĕркелӳçĕсем хресченсемпе фермерсен хуçалăхĕсен ассоциацийĕсен, хулари, Нурлат районĕнчи предприятисемпе учрежденисен тĕп бухгалтерĕсене йыхăрчĕç. Ку тĕрĕс, мĕншĕн тесен вĕсене Тутарстан Республикин Министрсен Кабинечĕ август уйăхĕнче "ТР çемье членĕ пуçне пĕрлехи вăтам тупăша шутламалли йĕрке çинчен" йышăннă постановленипе хăйсем практикăра усă курнисем ăнлантарма пултарчĕç. ТР Социаллă тивĕçтерӳ министерствин компенсаци тӳлевĕсемпе пособисен пайĕн начальникĕ **Т.Н.Аляева** тата специалисчĕ **Е.Н.Юдина** хăйсем тĕрĕслесе тăракан çул-йĕрсене пĕлтернĕ хыççăн ыйтусем сахал пачĕç пулсан, ТР Госкомĕçĕн социаллă гарантисен пайĕн начальникне **Л.Н.Колесникована** трибуна умĕнче активлă ĕçлеме тӳр килчĕ. Кăна ăнланмалла та ĕнтĕ, çак документа пуçараканни шăп Госкомĕç пулнă вĕт, ăна пурнăçа кĕртесси чи малтан бухгалтери учечĕпе, отчетлăхĕпе тата статистикипе çыхăннă. Çак Постановлени пĕлтерĕшне икĕ сăмахпа ăнлантарсан, маларах пĕрлехи вăтам тупăша шутланă чухне тӳрременхи налуксене çеç илнĕ пулсан, халь тĕрлĕ категорири халăхăн мĕнпур социаллă çăмăллăхĕсене шута илеççĕ. Калăпăр, çуртйĕршĕн, çурт-йĕрпе коммуналлă услугăсемшĕн тӳленĕшĕн, шкул çулне çитмен ачасен учрежденийĕсемпе усă курнăшăн тата ыттишĕн. Çак мерăсем анлă сарăлман пулин те, анчах вĕсем кирлĕ, çивĕч тата тӳрре тухнă. Татьяна Николаевна Аляева каярах пĕлтернĕ тăрăх, пирĕн обществăра такамăн шучĕпе пурăнас йăла пур-ха: сăмахран, инвалидашшĕн çăмăллăхĕсемпе (вăл тивĕçлĕ ĕнтĕ!) çемьен ытти членĕсем те усă кураççĕ. Тутарстанта халăха социаллă хӳтлĕх парассипе йышăннă Программа питĕ анлă пулнине аса илтерни вырăнлă: компенсаци тӳлевĕсемпе пособисене граждансен 29 категорийĕ илет.



Çав кун, октябрĕн 22-мĕшĕнче, семинарта инвалидсене реабилитацилекен пайĕн планĕпе те ĕç пурнăçланă.

**Н.Азизов сăнӳкерчĕкĕсенче: хăнасене çăкăр-тăварпа кĕтсе илеççĕ; Т.Н.Аляева сăмах тухса калать.**

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

**Октябрĕн 29-мĕшĕнче ВЛКСМ 80 çул тултарать**

## "Комсомол ахаль ят çеç мар, комсомол - манăн шăпа..."

**Комсомол организацийĕ хăйĕн ĕçне пĕтернĕ хыççăн часах 10 çул çитет. Анчах та комсомола мĕпле кăна суйса айăпласан та, чылай вăхăт иртнĕ пулин те çак организацин активлă ĕçне хутшăннă нумай çын çак тапхăра манмасть.**



***А.И.Газизуллин - ВЛКСМ Октябрь районĕнчи комитечĕн 1964-1970 çулсенчи пĕрремĕш секретарĕ.***



- Комсомол - пĕтĕм манăн пурнăç, ачаран тытăнса хальхи вăхăтчен. Комсомола - пĕтĕм енлĕ воспитани шкулне - эпĕ яланах тав тăвап.

Мана комсомолта республикăри комсомола Раис Киямович Беляев - паллă, вăйлă çын ертсе пынă вăхăтра ĕçлеме тӳр килчĕ. Пирĕн районти комсомол организацийĕ малта пыраканнисен, йĕркеллисен, пуçаруллисен шутĕнчеччĕ. Часчасах семинарсем, комсомол активĕн вĕренĕвĕ иртетчĕ. Мĕнле сферăна илсен те - производствăна, ял хуçалăхне, çутĕçе, культурăна - комсомол организацийĕ пур çĕрте те пуçарулăх кăтартатчĕ, сăмахран, хăть комсомолецсемпе çамрăксен звенисене, бригадисене илер. Халь те çамрăксемпе тĕллевлĕ ĕçлемелле тесе шутлатăп. Организаци ячĕ ниме те пĕлтермест, чи кирли - унăн пĕлтерĕшĕ. Паян вара тĕрлĕ вăхăтра гуманизм, хастарлăх, нравственность шкулне иртнисене комсомол юбилейĕпе саламлатăп, вĕсене малашне те ăнăçу сунатăп.

***А.Н.Миназов - ВЛКСМ районти комитечĕн 1970-74 çулсенчи пĕрремĕш секретарĕ.***

- Комсомол питĕ кирлĕ задача - çамрăксене пурнăçа хатĕрлессине пурнăçланă. Çамрăксен ĕмĕчĕсем, ĕçĕсем, шанчăкĕсем шăпах комсомолпа çыхăннăччĕ. Астăватăп-ха, пĕр çул, "Игенче" колхоз председателĕпе С.С.Гафуровпа калаçса татăлса, эпир пĕр кунра комсомолецсемпе çамрăксен 9 туйне йĕркелерĕмĕр. Кашни пуçару комсомолпа çыхăннăччĕ. Çамрăк специалистсемпе тĕл пулни, социализмла ăмăртусем, тĕрлĕ рейдсем - сигнал çеç памаллаччĕ, вырăнти çамрăксем ĕçе активлă пуçăнатчĕç. Çак çулсем чунра ырă асаилӳсем çеç хăварчĕç. Хальхи вăхăтра çамрăксене пĕрлештерсе тăракан организаци çуккипе вĕсен хушшинче ырă мар йăласем нумай пуль.

***И.И.Ермилова - ВЛКСМ районти комитечĕн 1985-90 çулсенчи секретарĕ.***

- Комсомол мана питĕ нумай пачĕ. Чи малтан тĕрĕслеве тивĕçлĕн чăтса иртторме, ĕçлеме, йĕркеллĕ, хастар пулма вĕрентрĕ, урăхла каласан, комсомол характера туптарĕ. Комсомолта ĕçленĕ вăхăтра час-часах интереслĕ çынсемпе тĕл пулаттăмăр, тĕрлĕ йывăр лару-тăрури ыйтусене татса пама вĕренеттĕмĕр, çавна май тавракурăм анлăланчĕ, пурнăç опычĕ пухăнчĕ.

Халь хăш-пĕр чухне пĕрле пуçтарăнсан, эпир çав вăхăтсене тав туса аса илетпĕр.

## Техника хăйне пăхнине юратать

Районти хуçалăхсенче хирти ĕçсем вĕçленеççĕ. Çавăнпа та техника упрама лартасси хальхи вăхăтра çивĕч ыйту шутланать. Ял хуçалăхри тĕп машинăсем çулталăкра 2-7 уйăх çеç ĕçлени вăрттăнлăх мар, ытти вăхăтра вĕсем ĕçсĕр тăраççĕ. Çавăнпа та 1999 çулхи хирти ĕçсем тĕлне вĕсен хатĕрлĕхĕ вĕсене атмосфера нӳрĕклĕхĕнчен, хĕвел пайăркисенчен, сывлăш температурин улшăнăвĕсенчен сыхлассине йĕркеленинчен чылай килет.

Хальхи вăхăтра хресченсен хуçалăхĕсен "Заветы Ильича", Синдряков ячĕпе хисепленекен, "Москва", Козлов ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕсенче тата ытти хăш-пĕр хуçалăхсенче ку ыйту тĕлĕшпе ĕçсене лайăх илсе пыраççĕ.

Ял хуçалăх машинисене тата тракторсене лайăх упраса ĕçсем тĕлне хатĕрлес тĕллевпе вĕсене юсама, упрама лартма звеносем йĕркеленĕ. Вĕсене çума эстакадăсем хатĕрленĕ, машинăсене консервацилемелли хатĕрсемпе тивĕçтернĕ.

Çав вăхăтрах техника вăхăтлă хатĕрлеменнипе тата хирти ĕçсен срокне тăснипе хресченсен хуçалăхĕсен "Правда", "Восход", "Урняк", "Чулпан" ассоциацийĕсенче, "Черемшан" агрофирмăра (Гайтан, Кукăркӳл бригадисем), Хафизов ячĕпе хисепленекен, "Тан", "Сĕнче" хуçалăхсенче çак ĕçе пуçăнман тесен те юрать.

Çак фактсене тĕпе хурса ку хуçалăхсен ертӳçисене çитменлĕхсене пĕтерме срок кăтартнă предписанисем панă. Гостехнадзор инспекцийĕ тата ял хуçалăх управленийĕн механизаци пайĕ техникăна ГОСТ требованийĕсемпе килĕшӳллĕн упрама лартма тата ял хуçалăх машинисемпе тракторсене юсама тытăнассине йĕркелеме пур мерăсем те йышăнĕç.

**Р.САТДАРОВ,**
**"Гостехнадзор" инспекци начальникĕ.**

## Хаçат çырăнакансене пĕлсе тăма

1999 çулхи пĕрремĕш çур çула районта тухса тăракан "Дуслык" ("Дружба", "Туслăх") хаçата çырăнтарасси октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçланать. Хаçат хакĕ - **25 тенкĕ те 20 пус**; Аслă Отечественнăй вăрçа хутшăннисен тата инвалидсен, Афганистанра пулнă воин-интернационалистсен, ЧАЭС аварие пĕтернĕ çĕре хутшăннисен 50 процент кăна тӳлемелле (çирĕплетекен документсем пулсан).

**Çапла, хаçат çырăнтарасси малалла пырать, çырăнтаракан пунктсене васкăр.**

# Социаллă хўтлĕх паракан органсен çĕнĕ задачисем

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.).

Инвалидсене реабилитацилекен патшалăх службине йĕркелени, вĕсене чăрмавсăр ĕçлеме лару-тăру туни, районти комплекслă программăсене ĕçлесе хатĕрлемелли çинчен ТР тивĕçлĕ пайĕн начальникĕ **Н.Г.Мадиев,** тĕп тата ертсе пыракан специалистсем **Р.Р.Валиевапа И.И.Милюков** пĕлтерчĕç тата практикăлла анлă сĕнÿсем пачĕç. Ыйту, мĕн тесен те, çав тери çивĕч тăрать, инвалидлăхпа çыннăн ватлăхĕ çыхăннă вĕт. Законра, политикăра инвалидсем тĕлĕшпе ырă енсем нумай пулин те, çак категорин çивĕч ыйтăвĕсем (Нурлат хулинче тата районта тĕрлĕ категорири 2490 инвалид пурăнать) çителĕклĕ. Вĕсен ытти çынсенни пекех, прависем пур, вĕсем пĕлÿ туяннă, анчах социаллă тата экономика чăрмавĕсем инвалидсене паян общество пурнăçне пур енчен те хутшăнма май памаççĕ.

Хулапа районти инвалидсене реабилитацилессин комплекслă программисене пурнăçа кĕртни граждансен çак категорийĕпе вĕсен ыйтăвĕсене татса парас, инвалидсене медицина, психологи енчен пулăшас, спортпа сывлăх ĕçне иртгерес, пушă вăхăта йĕркелес тата ытти тĕлĕшпе уйрăммăн ĕçлеме (çакă питĕ кирлĕ!) условисем тума май парĕччĕ.

**Республикăри зонăри семинарăн иккĕмĕш кунĕнче те питĕ кирлĕ ыйтусене хускатрĕç. Унта хутшăннисене саламласа Нурлат хулипе Нурлат районĕн администраци пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин** тухса каларĕ. Экономика йывăрлăхсене пăхмасăр, пирĕн социаллă инфраструктура лайăх аталаннине, ватă çынсен, инвалидсен, вăрçăпа ĕç ветеранĕсен ыйтăвĕсене патшалăх органĕсем ăнланнине тата пулăшнине палăртса каларĕ. Социаллă пулăшу парасси май пур таран малашне те пурнăçланĕ. Администраци пуçлăхĕ район опычĕ çинчен пĕлтернипе кăна çырлахмарĕ, халăха социаллă хўтлĕх паракан органсен ертўçисем "çавра сĕтел" ĕçĕнче çĕкленĕ тĕп ыйтусене сўтсе явассине те хутшăнчĕ. Ăна Тутарстан Республикин социаллă тивĕçтерў министрĕ **К.Н.Новикова** ертсе пычĕ. Клавдия Николаевна палăртнă тăрăх, зонăсенчи семинарсен (тата тепри часах Хусанта пулĕ) ĕç итогĕсемпе ТР Министрсен Кабинечĕн çитес çывăх вăхăтри ларăвĕнче адреслă социаллă хўтлĕх паракан системăна лайăхлатассипе çыхăннă ыйтусене сўтсе явма хатĕрленме тата социаллă хўтлĕх паракан органсен ĕçне лайăхлатма усă курма шутлаççĕ. Министр çакăнтах вĕсен малта тăракан тĕп ĕçĕсене палăртрĕ. Çакă, пĕрремĕшĕнчен, информаци парасси (компьютер тата программа тивĕçтерĕвĕ), кадрсене хатĕрлесси тата социаллă тивĕçтерў учрежденийĕсен системине мĕнпур çĕрте аталантарасси. Сăмах май, акă ăçта иккен пĕлтерĕшĕ... 2000 çулччен республикăра çавăн пек 220 учреждени уçма шутлаççĕ - социаллă приютсем, реабилитаци центрĕсем, Ветерансен çурчĕсем тата ытти те. Плансем пур, анчах финанс тивĕçтерĕвĕ енчен йывăрлăх нумай. Хăйĕн калаçăвне "шутласа пăхмалли информаци" тесе, К.Н.Новикова социаллă хўтлĕх паракан органсен ертўçисене министерствăсен тата социаллă хўтлĕх паракан мĕнпур органсен ĕçне лайăхлатассипе, хальхи законсем хатĕрлекен тата нормативлă базăна улшăнусем кĕртессипе çыхăннă хăйсен сĕнĕвĕсене ТР, социаллă тивĕçтерў министерстви, ТР Госкомĕç адресĕпе пама ыйтрĕ. Министр ыйтнине шута илчĕç, тухса калаçакансен списокне малтанах хатĕрлемен, çавăнпа та калас текенсем пурте хăйсен сăмахне каларĕç, çав шутра вăрçăпа ĕç ветеранĕсен районти совечĕн председателĕ **И.У.Гилязев** та. Ĕçлĕ дискусси пынă вăхăтра пенсисемпе пособисем илекенсем çинчен вырăнсенче социаллă даннăйсен базисене йĕркелес, социаллă юридици службине аталантарас, социаллă учрежденисене пăхса тăрас тата ытти тĕлĕшпе сĕнÿсем пачĕç. Администраци пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин вара ТР бюджетне йĕркеленĕ май çак тĕллевсемпе тухнă тăкаксен статйисемпе усă курни малта тăни çинчен хăйĕн шухăшне пĕлтерчĕ, К.Н.Новикова вара ыйтăва ТР Министрсен кабинетĕнче сўтсе явнă чухне отрасле пулăшма унпа калаçса татăлчĕ.

Администраци аппарачĕн ертўçи **Ф.Р.Ногуманова** тата халăха социаллă хўтлĕх паракан управлени начальникĕ **Л.Н.Дильмухаметова** ертсе пынипе семинара хутшăннисем социаллă тата производство объекчĕсемпе паллашрĕç, хулари "Ветеран" клубăн "Сывлăх сунатăп, тухтăр!" мероприятире пулса курчĕç, Çамрăксен çуртĕнче вара инвалидсен пултарулăх выставкине йĕркеленĕччĕ.

Нурлатри зонăри семинар итогĕсене Клавдия Николаевна усăллă тесе хакларĕ. Тутарстан Республикинче пĕрлĕхлĕ социаллă политика пур-и тесе ыйтсан, вăл çак тĕлĕшпе 100 ытла нормативлă документ йышăннине çирĕплетсе палăртрĕ.

- Çак задачăсене пурнăçа кĕртме сĕнÿ памалла, - терĕ министр. - Халăха социаллă хўтлĕх паракан органсен коллективĕсене хăйсен вăйхăвачĕпе туллин усă курма пулăшмалла.

**Т.НАЗАРОВА.**







Н.Азизов сăнÿкерчĕкĕсенче: К.Н.Новикова инвалидсен творчествин выставкине пăхать: дискусси пырать: семинар занятийĕсем иртеççĕ.

***Раççей Федерацийĕнче этем прависен çулталăкĕ пырать***

# Прокурор протестленĕ...

## (Прокуратура иртнĕ 9 уйăхра ĕçленин итогĕсем тăрăх)

Экономикăпа социаллă сферăсенче, законсене пурнăçланине, çаплах этем прависене пăхăннине тĕрĕсленĕ чухне ĕçшĕн тўлесси, тўлевлĕ дисциплина çинчен закона, налукпа банк законне пурнăçлани тĕп вырăн йышăннă. Халăха социалла хўтĕлесси çинчен, ĕç сыхлавĕ, харпăрлăх, çĕр çинчен закона пурнăçланине, граждансен çурт-йĕр тата ытти конституци прависене пăхăннине тĕрĕслесе тăрассине те пысăк тимлĕх уйăрнă. Çапла, ĕç коллективĕсен членĕсем майлă прокурор ĕç укçи тата пособисем 141 пин тенкĕлĕх шыраттарса илесси çинчен тĕрлĕ организацисене 17 тавăç тăратнă. Ку енĕпе "Урняк", "Рассвет" ассоциацисен правленийĕсене представленисем кĕртнĕ, Правăна администраци енчен пăснăшăн МСОн ĕлĕкхи начальникĕ тĕлĕшпе ĕç пуçарнă.

Ĕç законне пурнăçланине тăтăшах тĕрĕслени ертўçĕсем КЗоТ никĕсĕсене час-часах япăх пĕлнине кăтартать, çавăнпа та практикăра унăн статйисене хытă пăсаççĕ. Çапла, Якаелĕнчи вăтам шкулта штат шутне чакарассипе ĕçрен кăлармалли приказ законсăр пулни палăрнă - ĕçчене малтанхи вырăнтах хăварнă. Ĕç законне пăснин фончĕсем тĕлĕшпе МПП начальникне представлени кĕртнĕ.

Раççей Федерацийĕн "Ахаль çынсенчен тупăш тăрăх налук илесси çинчен" калакан законне тата ытти налук законне пурнăçланине тĕрĕсленĕ хыççăн налук инспекцине тупăшсем çинчен деклараци тăратман 5 предпринимателе палăртнă. Налук законне пăснăшăн вĕсем тĕлĕшпе ĕç пуçарнă.

Налук инспекцийĕпе районти потребительсен прависене хўтĕлекен комитет монополие хирĕç закона, "Потребительсен прависене хўтĕлесси çинчен" Закона пăхăннине тĕрĕсленĕ. МППра, ăшă сечĕсен предприятийĕнче, районти çыхăну узелĕнче тарифсене ўстернин факчĕсене палăртнă. Правăна пăсакансем тĕлĕшпе финанс санкцийĕсем йышăннă.

Прокуратура вырăнти самоуправлени органĕсем право акчĕсене законпа килĕшўллĕн çырнине тĕрĕслесе тăрать. Çапла, иртнĕ тапхăрта вырăнти самоуправленин Совечĕсен 9 решенине протестленĕ, çав шутра А. гражданин "Кондурча" ассоциацишĕн усăллă сиен тўснине саплаштарни çинчен, Кăрмăш ял Советне кĕрекен ялсен гражданĕсен 4 решенине тĕрĕс мар тесе йышăннă.

Хафизов ячĕпе хисепленекен ассоциацире çĕр законне пурнăçланине тĕрĕсленĕ чухне фермер хуçалăхне уйрăлма кăмăл тунă çынна çĕр пайĕ шучĕпе çĕр участокĕ пама хирĕçленин фактне палăртнă. Прокурор çакна протестленĕ. Кузнецов ячĕпе хисепленекен ассоциацире çурт-йĕре приватизацилесси çинчен закона пурнăçланине тĕрĕсленĕ тата коллективлă предприятисенче йĕркене пăснине палăртнă. Çак хуçалăх правленине представлени кĕртнĕ. Прокуратура предприятисемпе учрежденисен, организацисен должноçри çыннисем прокурор требованийĕсене пурнăçланине пĕрмай контроллет. Вĕсене пурнăçламаншăн айăплисене явап тыттараççĕ.

*Ҫивӗч ыйту*

## Вут-ҫулӑм - патша, патша майри вара шыв

тесе асӑрхаттарнӑ ӗлӗкренех ватӑ ҫынсем.

Ҫӗнӗ ӑру ҫыннисем ҫак сӑмахӑн пӗлтерӗшӗ ҫинчен пит шутласах каймаҫҫӗ, ҫавӑнпа та хӑш-пӗр чухне вутпа пытанмалла выляма та пултараҫҫӗ, вӗсене тивмесӗр иртсе каясса шанаҫҫӗ. Иртсе те кайкалать ӗнтӗ, анчах хӑш вӑхӑтчен. Тимсӗрлӗх капкӑнӗсем питӗ ӑста пытанса ларнӑ, вӗсене лекесси йывӑрах мар. Кам вара ҫак "патшапа" паллашнӑ, вӑл унӑн хаяр кӑмӑлне мӗн виличчен те манмӗ. Ӑна "патша майри" ҫеҫ лӑплантарма пултарать, анчах та кирлӗ вӑхӑтра вӑл вырӑнта яланах пулать-и? Ҫук ҫав...

Акӑ статистика та ҫавӑн пекех. Иртнӗ хутра 9 уйӑх хушшинче пурӑнмалли ҫурт-йӗр секторӗнче пулнӑ пушарсен шучӗ ҫинчен пӗлтерсен (64) эпир сиен тӑкакне асӑнмарӑмӑр, вӑл пире тӗрӗсех мар пек туйӑнчӗ. Мӗншӗн-ха? Мӗншӗн тесен вӑл ҫак тапхӑрти страховани суммипе пӗр пек. Апла та пулма пултарать-и?! Пултарать иккен. Госпожнадзор даннӑйӗсем тӑрӑх, "йӑлари" пушарсен тӑкакӗ кӑҫал 424 пин тенкӗ шутланать, "Госстрах" вара халӑха нумайрах та - 500 пин тенке яхӑн тӳленӗ, паллах ӗнтӗ, инкек хыҫҫӑн ҫеҫ. Кунта тата ҫакна шута илмелле, килӗшӳ тунӑ чухне ҫынсем пӗчӗк страховани ставкине тума тӑрӑшаҫҫӗ (укҫа ҫитнӗ таран ӗнтӗ, уйрӑмах ялта).

Пушарсем мӗн чухлӗ сиен кӳнине вара шухӑшламалли ҫеҫ юлать.

Анчах та пушарсен сӑлтавӗсене пурне те палӑртнӑ, вӗсем пурте тӗрӗс тесе шантарса калама ҫук ӗнтӗ. Вӗсен хушшинче чи малта "электрооборудовани монтажламалли тата ӗҫлеттермелли правилӑсене пӑсни", ӑна пушарсен 30 тӗслӗхӗ тивет. Ку вӑл тӗрлӗ замыкани (тулти е шалти), утюга е плиткӑна сӳнтермесӗр хӑварни, электропроводсем, изоляци кивелни (час-часах тата пур ҫӗрте те), ҫынсем усӑ куракан "жучоксем" тата ытти те. Ку списокра вут-кӑварпа асӑрханулӑ пулманни те пур (8), пирус туртнӑ чух сыхӑ пулманни (7), кӑмака юсавсӑр пулни (6). Анчах та ҫакӑ интереслӗ: кӑҫал Ҫирӗклӗ ялӗнче темиҫе ҫурта чӗртсе ҫунтарнине "электропроводка юсавсӑр пулнипе" тесе палӑртнӑ.

Чурапаттӑр ялӗнчи пушарӑн та "алиби" пур. Вӑл та юсавсӑр электропроводкӑран пуҫланнӑ, урӑхла каласан, ҫутӑран. Ҫӗрӗпе ним шухӑшсӑр савӑннӑ хыҫҫӑн сӳнтермесӗр хӑварнӑ ҫуртаран мар-ши вара. Халь мӗн калаҫмалла ӗнтӗ! - тейӗҫ хӑшӗсем. Ҫӑнах та пушар мӗнрен тухнӑ пулин те, пурте ҫунса кайнӑ вӗт-ха. Пушар хыҫҫӑн шыв кирлӗ мар.

**Д.ТЯМАЕВА.**

** Ялкорсем ҫыраҫҫӗ*

## Ҫавӑн пек ҫемье пур

Ял хӗрарӑмӗн пурнӑҫӗ ҫӑмӑл мар. Ял хуҫалӑхӗнче ӗҫленисӗр пуҫне, унӑн килӗнче те ӗҫ ҫителӗклӗ. Эпӗ вара паян хуҫалӑхри чи лайӑх дояркӑсенчен пӗрин - Гульсум Салахова ҫинчен каласа парас тетӗп, вӑл выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетессинче вӑтӑр ҫула яхӑн вӑй хурать ӗнтӗ.

Ҫавӑн чухлӗ ҫул фермӑра ӗҫлес тесен хӑвӑн профессине, выльӑхсене питӗ юратмалла, чӑтӑмлӑ пулмалла тесе шутлатӑп эпӗ. Унран нихҫан та ывӑннӑ пирки ӳпкелешнине илтместӗн, яланах хаваслӑ, уҫӑ кӑмӑллӑ, ыттисемпе хуйха та, савӑнӑҫа та пайлама хатӗр.

Гульсум сӑнӳкерчӗкӗ нумай вӑхӑт хушши Хисеп хӑми ҫинче тӑчӗ, ӑна район тата ял Совечӗсен депутатне пӗрре мар суйланӑ. Ҫулсерен отчетпа суйлав пухӑвӗсенче Салахована малти вырӑнсем йышӑннӑшӑн укҫа премийӗпе наградӑланӑ.

Гульсум мӑшӑрӗ - Накиф - хуҫалӑхри чи кирлӗ профессисенчен пӗрне суйласа илнӗ, вӑл - автокрановщик. Хӑйӗн ӗҫне питӗ лайӑх пӗлет, тӳрӗ кӑмӑлпа пурнӑҫлать, хуҫалӑх правленийӗ ӑна кашни ҫул хаклӑ парнесемпе чыслать, сӑнӳкерчӗкӗ вара яланах Хисеп хӑми ҫинче.

Вӗсем виҫӗ ача пӑхса ӳстернӗ.

Салаховсен икӗ хӗрӗ качча тухса, ҫемье ҫавӑрнӑ, виҫҫӗмӗшӗ - Лейсан Ҫыранҫи Чаллӑри кулинари училищинче вӗренет. Ҫакӑн пек чаплӑ ҫемье пурӑнать пирӗн хуҫалӑхра. Вӗсене малашне те ӑнӑҫлӑхсем, сывлӑх, ӗҫре ҫитӗнӳсем сунас килет.

**З.ИСМАГИЛОВА.**
**Кӑчӑканлӑ ялӗ.**

# Кислев сывӑхӗнче тупнӑ япаласем



## Кивӗ масар патӗнче

Нурлат-Альметьевск маршрутпа кайса Киклӗ ялӗнчен иртсен сулахайра сӑртлӑ вырӑн пур, унта ӗлӗк-авал вилнисене пытарнӑ. Халӑхра ӑна Кивӗ масар теҫҫӗ. Хальхи вӑтам ҫулсенчи киклӗсем аса илнӗ тӑрӑх, вӗсем ача чухне, масар патӗнчи хире сухаланӑ вӑхӑтра час-часах суха кассинче тӑм савӑт-сапа ванчӑкӗсем, тимӗр татӑкӗсем тата шӑмӑсем тупнӑ. Ӗлӗкхи масар халь тытнӑ картаран та тухни курӑнать, ҫапла вара, вӑхӑт иртнӗҫем унта суха тунӑ. Кислеве археологсем килсен ҫакӑн пек задача лартнӑ: чавса шырамалли плана тата вырӑнти сӑмах-юмаха шута илсе Кивӗ масар патӗнче те шырамалла.

Масар картин тулашӗнчи ҫеремре Ильгизар Равильевич Газимзяновпа Радик Равилович Валиуллин археологсем (ӳкерчӗкре) чавса шыранӑ. Вӗсенчен пӗрремӗшӗ ҫак ӗҫ ҫинчен ҫапла каласа парать: "Масар Кивӗ ялӑн шӑпипе ҫыхӑнни пирки иккӗленмелли ҫук. Сухалакан хир пулса тӑнӑ масарӑн чи авалхи пайӗ язычество тапхӑрӗнчи пулмалла. Ҫакӑн ҫинчен ҫынна пурӑннӑ чухне япалисемпе пӗрле пытарни пӗлтерет. Малтанах эпир тӗкӗнмен сийе чавса шырарӑмӑр. Кунта тарӑнах мар пытарнӑ виҫӗ вил тӑпри тупрӑмӑр. Шӑмӑсем мӗнле выртни тӑрӑх, виҫҫӗшне те пуҫӗсене кӑнтӑр енне туса пытарнӑ, урӑхла каласан, мусульмансен йӑлипе. Икӗ вил тӑпри юнашар вырнаҫнӑ, виҫҫӗмӗшӗ - кӑшт аяккинерех. Пӗрремӗш шӑтӑка 40 ҫулсенчи 160 сантиметр ҫӳллӗш арҫынна пытарнӑ пулӗ тетпӗр, иккӗмӗшне - 10-12 ҫулти ачана, виҫҫӗмӗшне - вӑтам ҫулсенчи хӗрарӑма. Ытти япаласен йӗрӗсене асӑрхамарӑмӑр. Шӑтӑксене тӳрӗ алтнӑ, кун пеккисене мусульмансем валли чаваҫҫӗ тата вӗсене тарӑн чавман. Ҫак вил тӑприсем Ылтӑн Урта тапхӑрӗнчисем пулмалла. Ҫывӑхра ытти вил тӑприсем пулманни, тарӑн чавманни тата масар тулашӗнче пулни ҫакӑн ҫинчен шутлама хистеҫҫӗ: кусем ҫакӑнта пурӑнакансем мар, иртсе ҫӳрекенсем пулнӑ куран. Темиҫе шӑммине эпир лаборатори анализӗсем тума хамӑрпа пӗрле илтӗмӗр.

Пытарнӑ вырӑнсене мӗнле пулнӑ ҫавӑн пекех майлаштарса хупларӑмӑр".



## Пӑлхар ӑстисен йӗрӗпе...

Ҫулӑн сылтӑм енче, сӑртлӑ вырӑнта та чавса шыранӑ. Ҫак лаптӑкра "Кивӗ Хусан" заповедникӑн директорӗн наука шыравӗ енӗпе ӗҫлекен ҫумӗ Мурат Мазитович Кавиев ӗҫленӗ. Шырав ӗҫӗсем вӗҫленсен вӑл хӑйсен пӗрремӗш результачӗсене ҫапла ӑнлантарчӗ: "Хӑҫан-тӑр Пӗчӗк Ҫарӑмсан шыв ҫулӗ ҫак сӑрт патӗнчен иртнӗ. Ҫак лаптӑка эпир халӑх ятне патӑмӑр: Искэ Авыл (Кивӗ ял). Пурӑнакан тӗп вырӑнтан аяккарах ремесла мастерскойӗсем вырнаҫнӑ пулнӑ пулӗ, ҫав шутра тимӗрҫӗ лаҫҫисем те. Чавса шыранӑ вӑхӑтра тупнӑ кӑмака никӗсӗ, кӗл, кӑмрӑк, савӑт-сапа ванчӑкӗсем - пурте ҫакна ҫирӗплетеҫҫӗ. Хальхи вӑхӑтри эмел савӑчӗсене е суланчана аса илтерекен савӑт тупнӑ, вӗсемпе тӗрлӗ шӗвек яма усӑ курнӑ пулас. Сирпӗтмелли шӗвек янӑ ҫакӑн пек савӑтсемпе ҫапӑҫу хирӗнче граната вырӑнне усӑ курнӑ. Ку вырӑнта керамика ванчӑкӗсем чылай тупнӑ. Пахалӑхӗ, мӗнле тата мӗнрен хатӗрлени кунта пин ҫул каярах пурӑннӑ пӑлхар ӑстаҫисем тунине ҫирӗплетеҫҫӗ. Пӑлхарсем тӑм савӑт-сапа хатӗрлессипе ӑстаҫӑсем пулнӑ вӗт.

Вӗсем тунӑ илемлӗ савӑт-сапа питӗ паха пулнипе уйрӑлса тӑнӑ теме пулать. Ӑстаҫӑ савӑт-сапа тӗпне хӑйӗн штампне лартнӑ.

Ремесла мастерскойӗсене пурӑнакан вырӑнтан аяккарах, юханшыв ҫывӑхне вырнаҫтарнӑ, ҫакӑнта пушартан сыхланассине шута илнӗ. (Ҫаплах тимӗрҫӗсем усал вӑйпа ҫыхӑнни ҫинчен сӑмах-юмах ҫӳренӗ, ҫавӑнпа вӗсене пурӑнакан вырӑнтан аякка лартнӑ).

Чавса шыранӑ вырӑнта сӑрӑ йӗр палӑрать - кӗл сийӗ. Ку ӗнтӗ пушар пулнине пӗлтерет пулӗ, сӑлтавӗ вара вутпа асӑрханусӑр пулни те, тӑшмансен каварӗсем те пулма пултараҫҫӗ.

Чавса шыранӑ виҫӗ лаптӑкра та кӑсӑк япаласем тупнӑ. Пирӗн ҫаксене пурне те пӗтӗмлетмелле, наука енчен хакламалла. Чи кӑсӑкки вара вӑл эпир виҫӗ тӗрлӗ истори тапхӑрӗнчи пӗр вырӑнти виҫӗ археологи пытарӑвне тупса палӑртни. Вӗсенчен пӗрремӗшӗ - Кислев патӗнчи лаптӑк - именьково тапхӑрӗнче пурӑннӑ вырӑн; иккӗмӗшӗ - Киклӗ патӗнчи сӑрт ҫинче - Пӑлхар тапхӑрӗнчи ремесла мастерскойӗсен вырӑнӗ; виҫҫӗмӗшӗ - кивӗ масар патӗнче - Ылтӑн Урта тапхӑрӗнчи вил тӑприсем".

Ку питӗ интереслӗ, ҫакӑ историпе археологи шыравне хутшӑнакансене пурне те кӑсӑклантарать.

* * *

Ҫак археологи япалисем ученӑйсене кӑна мар, ҫак вырӑнсенче пурӑнакансене те питӗ интереслентерчӗҫ. Апла пулсан, пирӗн патрах ҫуркунне шыв юхакан, хӗлле кӗрт хуплакан, ҫулла вара кӗтӳ кӗтмелли вырӑн пулса тӑнӑ Кислев таврашӗнче пысӑк Истори пурӑнать. Наука интересӗсемшӗн ҫеҫ тӑрӑшакан, хӑйсене валли нимӗн те ыйтман ҫынсем пур чухне хальхи экономика йывӑрлӑхӗсем ӑна тӗпчесе ҫитерме ан кансӗрлеччӗрччӗ.

**К.ЯМАЛЕТДИНОВА.**

**Н.АЗИЗОВ ӳкерчӗкӗсем.**

# "Халап эстафети"

Шкул интернатри ачасемшĕн пĕчĕк событи те уяв, ăна вĕсем чăтăмсăррăн кĕтеççĕ, ун тĕлне хатĕрленеççĕ. Нумаях пулмасть иккĕмĕш номерлĕ вăтам шкулăн спорт залĕнче йĕркеленĕ "Хаваслă стартсем" те вĕсене килĕшрĕç. Унта шкул-интернатри 5-7-мĕш классен виçĕ команди хутшăнчĕ. Эстафета йăлана кĕнĕ пек мар, урăхла иртрĕ. Кашни номер халапри мĕнле те пулин персонажчĕ. Чи малтан ачасем тимлĕрех пулччăр тесе ертсе пыракан хăйĕн хыççăн вĕсене тĕрлĕ халăх сăмахĕсене калаттарчĕ. Унтан кашни хăйсен юратнă халап геройĕ вырăнĕнче пулса курчĕç: Барон Мюнхгаузен, Тухатмăш карчăк, Йăва, Шапа-çулçÿревçĕ, Алиса тилĕ, Базилио кушак аçи.



Шăши те чылайăшне килĕшрĕ.

Итогсем тăрăх пĕрремĕш вырăна 5-мĕш класс команди (воспитателĕсем О.В.Бурнашевская тата Л.Ф.Кадырова) йышăнчĕ, иккĕмĕшне 7-мĕш класс команди, виççĕмĕшне - 6-мĕш класс. Çамрăксемпе ĕçлекен пай эстафета хутшăннисене асăнмалăх парнесем пачĕ.

Кайран ачасем валли дискотека йĕркеленĕччĕ. Уяв вĕçĕнче ачасем ăна йĕркелекенсене - 2-мĕш номерлĕ шкулти физкультура учительницине Е.Д. Хвостована тата çамрăксемпе ĕçлекен пай заведующине Р.Бикинеевана тав турĕç.

**Ф.ЗИЯТДИНОВА.**

## Сĕт-çу заводне экскурсие

Нумаях пулмасть эпир, хулари 8-мĕш номерлĕ вăтам шкулти 6-мĕш классенче вĕренекенсем, технологи учительниципе пĕрле сĕт-çу комбинатĕнче экскурсире пулса куртăмăр. Унта эпир сиплĕ те усăллă сĕткен ял ферминчен сутуилÿ çÿлĕкне мĕнле çитнине сăнама пултартăмăр. Малтан эпир сĕте йышăннине тата виçнине куртăмăр, унтан пире цехсене йыхăрчĕç: кунта тутлă тăпăрчă туса хатĕрлеççĕ тата сĕте, турăха, хăймана пластиклă пакетсене яраççĕ. Çак мĕнпур ĕçсене автомат пурнăçлать иккен. Кăшт каярах çу тăвакан ăстаçă пулăшнипе эпир услам çу туса хатĕрлемелли технологипе те паллашрăмăр.

Экскурси пире питĕ килĕшрĕ. Пурнăç пулăмĕсене учебниксем тăрăх тĕпчесе вĕренни - пĕрре, çаксене ху курни пачах урăх. Çакăн пек практика урокĕсем ытларах пулсан аванччĕ.

**И.ФЕДОРОВА,**
**8-мĕш вăтам шкул.**

## Асăрханулла пулăр: КĂМАКА

Тĕтĕм çулĕсене тĕрĕс мар тунине пула хутса ăшăтмалли тапхăрта 1997 çулхи сентябрь уйăхĕнчен тытăнса 1998 çулхи апрель уйăхĕччен 8 пушар пулнă. Çапла, пĕлтĕрхи октябрĕн 3-мĕшĕнче Тĕрнеç ялĕнчи П.А.Сенькинăн хуçалăхĕнче мунча çунса кайнă, ноябрĕн 18-мĕшĕнче - Анат Чаллăри В.В.Итринăн хуçалăхĕнче пÿрт çуннă, 1998 çулхи январĕн 19-мĕшĕнче Пÿлеркÿлĕнчи А.И.Матросовăн хуçалăхĕнче вут-çулăм хуралтăсене пĕтернĕ. Вут-кăвар çуртсен хуçисем кăмакисене вăхăтлă юсаманнипе тухнă.

Пушара пула кашни çемье сиен тÿсни вăтамран 600 тенкĕпе танлашать.

Ăшăтмалли сезон пуçланчĕ, эсир ун тĕлне хатĕрленнĕ-и вара?

**Асра тытăр! Пушар тухнин сăлтавĕсем:**

**- кăмакасем тата тĕтĕм çулĕсем çурăлни;**

**- кăмакасем ытлашши хĕрни;**

**- вут-шанкă çунакан кăмакасене сынсăр хăварни тата чĕртме резинăпа е бензинпа усă курни.** Çаксем пурте вут-кăвар тухасси патне илсе пыраççĕ.

**Н.НИКОЛАЕВА,**
**Нурлатри ПЧ инструкторĕ.**

## Çул çинчи инкек

Пирĕн çулсем çинче кÿлнĕ лашасемпе çÿренине час-часах курма пулать.

Октябрĕн 5-мĕшĕнче Нурлат-Альметьевск трасса çинче пулнă авари çакăн йышши транспортпа çÿремелли правилăсене тепĕр хут аса илме хистет.

23 сехет тĕлнелле К.Сайфуллин автомашинăпа пынă чухне хăйĕн умĕнче лаша пынине вăхăтлă асăрхаман та ун çине пырса кĕнĕ. Çавна пула 1979 çулта çуралнă А.Хвалеев больницăна илсе кайнă чухне çул çинче вилсе кайнă.



Авари пулнипе çамрăк çыннăн пурнăçĕ татăлнă. Авари лашапа çĕрле, нимĕн курăнман вăхăтра пынипе пулнă. Лашапа çĕрле çÿремелле мар, ку питĕ хăрушă. Пысăк çулпа хуллен пынипе вăл пысăк хăвăртлăхпа пыракан машинăсене çÿреме кансĕрлет. Лашапа 14 çултан аслăрах çынсен çеç çÿремелле:

- лашапа аслă çулăн сылтăм енĕн хĕррипе пĕр ретпе пымалла. Çуран çÿрекенсене кансĕрлемен çĕрте вара çул аяккинче те пыма юрать;

- лашапа кăнтăрла кăна çÿремелле, каçхине, нимĕн те курăнмасть пулсан, лашана йĕвентен тытса пымалла.

Çак правилăсене аса илтернĕ хыççăн малашне çул çинче çакăн пек инкек пулмасса шанас килет.

**Г.ГИМАЛТДИНОВА.**

## Салтак амăшĕн юрри

Сăвви Ю.Сементерĕн.
Кĕвви Н.Алексеевăн.

*Салтак теттĕмĕр, чыслă, теттĕмĕр,*
*Ячĕ тухасса, ай, кĕтеттĕмĕр,*
*Ячĕ тухрĕ те - хĕпĕртерĕмĕр,*
*Кавказа лексен - çитрĕ терĕмĕр.*

*Чечен çĕрĕ, ах, чечен мар иккен,*
*Инкекпе синкек пĕччен мар иккен.*
*Кам кунта тăван, кам кунта тăшман,*
*Таврара мĕн-ма шăхăрать тăхлан?*

*Тин кăна пăшал тытакан ача*
*Çапăçма кĕрет çак хаяр вăрçа:*
*Ах, патрон çыххи - шурă лантăш мар,*
*Перекен этем - хамăр тантăш мар.*

*Ылханатăп эп ытахаль вăрçа,*
*Вăл асап кÿрет пирĕн пурнăçа.*
*Тав-шава татар хĕç-пăшалсăрах,*
*Таврăнсам, ачам, таврăнсам часрах.*

**Иртнĕ номерте пичетленнĕ кроссворд отвечĕсем**

**Сулахайран сылтăмалла:** 3.Виньетка. 7.Хуанхэ. 8.Клинкер. 9.Тăрантас. 12.Кашăк. 14.Хур. 15.Куç. 16.Апорт.

**Çÿлтен аялалла:** 1.Сехет. 2.Ака. 3.Вилка. 4.Нанчăк. 5.Турăх. 6.Ангар. 10.Руса. 11.Тăпра. 13.Купе.

## Пĕлтерÿсем

**Çĕнĕ мар "Урала" сахăрпа улăштаратпăр. Телефон: 5-23-76.**

* * *

**3 пÿлĕмлĕ хваттере 2 тата 1 пÿлĕмлисемпе улăштаратпăр. Адрес: Заводская урамĕ, 9-14, телефон: 5-26-60.**

* * *

**Нурлатри ХСМУра ĕçлеме электрогазосварщиксем васкавлă кирлĕ. Ĕç тăрăх тÿлеççĕ. Адрес: Советская урамĕ, 144 (1-мĕш номерлĕ ПМК территорийĕнче).**

* * *

**"Нурлатри Сельхозтехника" АОра ĕçлеме крановщик тата электромонтерсем кирлĕ.**

**Нурлатри РУЭСĕ хулари тата ялсенчи телефон çыхăнăвĕн хваттерсенчи телефонсен, организацисемпе предприятисен абоненчĕсене 1998 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне телефоншăн парăма кĕнине тĕрĕслеме чĕнет.**

**РУЭС администрацийĕ.**




## Пĕлтерÿсем

**Сутатпăр:**

**Гараж. Адрес: Дружба урамĕ, 70-28, телефон: 5-26-02.**

* * *

**Стенка. Телефонсем: 5-41-62 (килти), 5-42-54 (ĕçри).**

* * *

**1997 çулхи июнь уйăхĕнче туса кăларнă ВАЗ-2106. Телефон: 2-17-35.**

* * *

**Тасатакан сооруженисем патĕнчи гараж. Телефон: 5-11-52.**

* * *

**ВАЗ-2101. Телефон: 5-44-13.**

* * *

**1997 çулта туса кăларнă ВАЗ-21099. Телефон: 5-14-23.**

* * *

**Кăрмăш патĕнчи нÿхреп. Телефон: 5-18-86.**

* * *

**Çурт. Мамăк ялĕнчи Ринат Губайдуллинран ыйтса пĕлмелле. Телефон: 4-13-01.**

* * *

**3-мĕш хутри 3 пÿлĕмлĕ хваттер. Адрес: Дружба урамĕ, 74-24, 17 сехет хыççăн пымалла.**

* * *

**Туй кĕпи, хаклă мар. Телефон: 2-19-71.**

* * *

**КамАЗ автомашина, полуприцеп. 5-38-63 номерпе 17 сехетчен шăнкăравламалла.**

* * *

**НГДУ ЖКХ патĕнчи гараж. Телефон: 5-18-23.**

*М.Б.Багрянцев врач çынсене эрех ĕçнинчен тата табак туртнинчен пĕр сеансра сиплет.*

*Пирĕн патра кăна!*

*Сеанса пĕтĕмпех анонимлă ирттеретпĕр. Сипленĕ чухне тăванĕсем пулма пултараççĕ. Справка паратпăр. Консультаци, калаçу, каярахри сăнавсем тата кодировани хыççăнхи пулăшу - тÿлевсĕр!*

*Сипленĕ кун, эрнекун, октябрĕн 30, ноябрĕн 13-мĕшĕсенче районти культура çуртĕнче 11 сехетре çырăнтару тата калаçу ирттеретпĕр. Лицензи МЗ РФ N00164-30, 1995 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче панă.*

**Пирĕн çывăх тăванăмăр Николай Васильевич КОЛЬЦОВ вилсе кайнă пирки чун-чĕререн хурланни çинчен пĕлтеретпĕр.**

**Çывăх тăванĕсем, юлташĕсем.**

**Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.**
**Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.**

**Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ**

**Хаçат эрнере виçĕ хут тухать - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.**

**ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.**

**ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.**

**Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.**

**Регистрацилеиĕ номерĕ 34.**

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 893. 4131